# ШУР ХУЛАМӐР ШУПАШКАР

*Станислав ТОЛСТОВ кӗвви*

Йӑлтӑркка хумсем килеҫҫӗ
Алла-аллӑн тытӑнса,
Кимӗсем ишсе ҫӳреҫҫӗ
Акӑш евӗр ярӑнса.
Ҫут тӗнчен илем кӗтесӗ,
Турӑ панӑ пархатар,
Шурӑ акӑш мар-ши эсӗ,
Шур хуламӑр Шупашкар?

Пахчисем уртаҫҫӗ шупӑр
Ҫурхи ӑшӑ каҫсенче,
Шӑпчӑксем калаҫҫӗ шӑпӑр
Кӗмӗл уйӑх айӗнче.
Ҫут тӗнчен паха кӗтесӗ –
Хурӑнсар та ҫӑкасар,
Ырлӑх сачӗ мар-ши эсӗ,
Шур хуламӑр Шупашкар?

Чӗрене лӑпкать сӑмахӗ,
Вӑй хушать юрри-ташши,
Сар хӗрсен тӗрри-ахахӗ –
Чун уҫҫи те чун ӑшши.
Ҫут тӗнчен хитре кӗтесӗ,
Турӑ панӑ пархатар,
Чӑваш чунӗ мар-ши эсӗ,
Шур хуламӑр Шупашкар?